Материал представлен из коллекции электронной библиотеки «Писатели Чувашии – детям» – **pchd21.ru**
Электронная библиотека создана Чувашской республиканской детско-юношеской библиотекой **– www.rdub21.ru** – на средства гранта Президента Российской Федерации для поддержки творческих проектов общенационального значения в области культуры и искусства

**Автор: Кадкин Лев Кириллович**

**Книга: Çĕрçи кăнтăрĕ**

**Рассказ: Инкубатор чĕппи**

Кил картинче чăх чĕппи пурăннă. Ни аппăшĕ-йăмăкĕ, ни пиччĕшĕ-шăллĕ пулман унăн. Амăшĕ те пулман, мĕншĕн тесен вăл инкубаторта тухнă. Вылясса та пĕчченех вылянă. Хаяр хур ами ăна хăй чĕпписем патĕнчен хăваланă. Пысăк ĕне пĕчĕкскерне асăрхаман та. Сурăхсем патне вăл çывхарман, мĕншĕн тесен лешсем темрен те хăранă, хайсем сисмесĕрех таптама та пултарнă. Ватă Барбос Барбосыч анчах килĕштернĕ сар çăмхана. Чĕпĕ ăна хăйĕн амăшĕ вырăнне хунă. ӳплере пурăнаканскер чĕппе хăй патне кĕме ирĕк pană, йĕпе-сапара юнашар выртнарнă, хăй ăшшипе ăшăтнă. Чĕпĕ ăçта та пулин кайсан, часах таврăнмасан йытă пăшăрханнă, йыхăрнă ăна, кĕçех шырама тапратнă.

«Ăçта кайса кĕтĕн эс, инкубатор чĕппи?» – мăкăртатнă вăл. Чĕпĕ инкубатор тенине ăнланман, апла пулин те ку сăмаха килĕштернĕ. Çакна хăйĕн чăн ячĕ тесе шутланă. Кампа та пулин паллашмалла чухне вара мăнаçлансах пĕлтернĕ: «Мана Инкубатор чĕппи тесе чĕнеççĕ!».

Пĕррехинче, кил хушшинче çӳренĕ чух, вăл хур чĕпписем патне пырса тухнă. Лешсем, сарă туталлă мамăк чăмăрккисем, ăна хăйĕн тăванĕсем пек курăннă, çавăнпа туслашас тенĕ те вĕсемпе. Анчах хур ами ăна хăваласа янă. Хăйне мăнна хуракан хур аçи сăхса илме те тăнă. Юрать-ха, пурне те асăрхакан Барбос Барбосыч пĕрре кăна хăрлатса илнĕ, лешĕ тӳрех хăйĕн мăшăрĕ патне чавтарнă.

Барбос Барбосыча картишĕнче пурте лайăх пĕлнĕ, хисепленĕ. Пĕррехинче чăх чĕппи, курăк çинчи кăпшанкăсене тата тырă пĕрчисене çиме пикеннĕскер, картишĕнчен урама тухса кайнине хăй те сисмен. Унта вара юнашарах çырма пулнă, çырминче йывăç тĕмĕсем ӳснĕ, хыт хура кашланă. Барбос Барбосыч асăрхаттарнăччĕ-ха ăна: «Асту, картишĕнчен ан тух. Атту çухалса кайăн та усал чĕр чунсен аллине лекĕн. Тем курса тăрăн тата». Çапла пулса тухрĕ те.

Вăл тăрăхра тилĕ ашкăнса çӳренĕ. Янă та илнĕ хайхи чăх чĕппине. «Ытлашши çуллах мар та-ха, пĕр апатлăх пырĕ-çке, – шухăшланă тилĕ. – Хуçисем шырама пикениччен шăвăнам-ха кунтан», – тенĕ вăл. Çав самантра сарă тута сăмах хушнă:

– Тилĕ, эс ăçталла васкатăн çак?

– Мĕнле «ăçталла»? Çырманалла ĕнтĕ.

– Кала-ха, тилĕ, мĕншĕн мана анчах хăвăнпа илтĕн? Манăн анне пур-çке. Эпир унпала халиччен çырмана анса курман. Ман ăна та пĕрле илес килет. Йышпа хаваслăрах вĕт.

Тилĕ тĕлĕннĕ: «Мĕнле айван чĕп пулчĕ ку? Хăех амăшне сĕнет. Капла вара ман йĕркеллĕ апатах пулать-иç».

– Хăвăртрах аннӳне чĕнсе кил эппин, паллашăпăр, пĕрле çырма курса çӳрĕпĕр, – тен.

Чĕппе ăсатнă та хăй вĕлтĕрен ăшне пытаннă. Хайхискер амăшне чĕнсе килессе кĕтнĕ.

Чĕп ӳпле патне çитнĕ те Барбос Барбосыча чĕннĕ:

– Атя-ха çырмана. Унта карта хыçĕнче тилĕ кĕтет пире. Санпа паллашасшăн вăл, уçăлма чĕнет.

Сисет ватă йытă кунта тем йĕркеллех маррине.

«Мĕнле тилĕ кĕтет? Тата çырмана уçăлма чĕнет-ха...» Çапах утать чĕпĕ хыççăн. Чĕппи, çырма карти патне çитнĕскер, кăшкăрать:

– Тилĕ, э, тилĕ, эсĕ кунта-и?!

– Кунтах эп, – тет тилли, – сире кĕтетĕп.

– Эп ир çитрĕмĕр аннепе. Халех паллаштарăп сире.

– Паллашар, паллашар, – тет тилĕ, хăй часрах чăхха ярса илес тесе карта шăтăкĕ патнерех пырать.

Шăтăкра вара чăх вырăнне Барбос Барбосыч пуçĕ курăнса каять:

– Эп пулатăп унăн амăшĕ, – тет йытă.

Тилĕ хăранипе шак хытса каять. Чĕпĕ вара Барбос Барбосыч тăвăр шăтăкран тухма хăтланнă хушăра тепĕр çурăкран сасă парать:

– Паллашар эппин, тилĕ. Мана Инкубатор чĕппи тесе чĕнеççĕ, ку вара – манăн анне. Вăл Барбос Барбосыч ятлă.

Тилĕ аран-аран тăна кĕрет. Ватă Барбос Барбосыч шăтăкран хĕсĕнсе тухнă çĕре вăл чылай аякка тарса ӳкет, кĕлте пек хӳрине хĕстерсе, Инкубаторăн çăмламас амăшĕ хыçран хăваламасть-ши тесе çаврăнса пăха-пăха чупать.

Все тексты взяты из открытых источников и выложены на сайте для не коммерческого использования.
Все права на тексты принадлежат только их правообладателям.